28-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
ОКТЯБРЬ
30
ЫТЛАРИКУН
211 (6962) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕн
Шупашкар хула комитетĕн,
ЧАССР Верховнăй Совечĕн
тата Шупашкар хула
Совечĕн хаçачĕ

Октябрьти Социализмлă Аслă Революци пулнăранпа 28 çул çитнĕ тĕле ВКП(б) Центральный Комитечĕ
ЧĔНСЕ КАЛАНИСЕМ

1. Октябрьти Социализмлă Аслă Революци 28 çул тултарни сывă пултăр!

2. Нимĕçсен фашистла империалисчĕсемпе Япони империалисчĕсене çĕнтернĕ аслă Совет халăхне мухтав!

3. Октябрьти Социализмлă Аслă Революци çĕнтерĕвĕсене хӳтĕлесе хăварнă тата тăшмана çĕнтернĕ паттăр Хĕрлĕ Çара мухтав!

4. Сывă пулччăр Совет çĕршывĕн Тинĕс-Çар Флочĕпе унăн паттăр морякĕсем!

5. Совет çĕршывĕн тулашĕнче пурăнакан Хĕрлĕ Çарпа Тинĕс-Çар Флочĕн воинĕсем! Мире тата хамăрăн Тăван çĕршывăн хăрушсăрлăхне сыхлăр, совет воинĕн чыслăхĕпе тивĕçлĕхне çӳлте тытса пырăр!

6. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешсе çĕнтерӳ тăвас ĕçре Совет халăхĕн союзникĕсем пулнă Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин, Францин, Польшăн, Югославин, Чехословакин, Бельгин, Голландин, Грецин, Албанин, Норвегин халăхĕсене салам!

7. Япони захватчикĕсене хирĕç кĕрешсе çĕнтерӳ тăвас ĕçре Совет халăхĕн союзникĕсем пулнă Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Великобританин, Китайăн халăхĕсене салам!

8. Гитлеровецсемпе çыхăну тытма пăрахса хăйсен хĕçпăшалне фашизма хирĕç çавăрнă Итали, Румыни, Финлянди, Болгари, Венгри халăхĕсене салам!

9. Сывă пултăр халăхсем хушшинчи çирĕп мир!

Халăхсен мирлĕ пурнăçне хăратса тăма агрессиллĕ çĕршывсене текех ирĕк парар мар!

10. Халăхсем хушшинчи мире, çапăçура çĕнтерсе илнĕ мире хӳтĕлес ĕçре сыхăлăхлă пулар!

Сывă пултăр Совет Союзĕ — халăхсен пĕтĕмĕшлĕ мирĕн тата хăрушсăрлăхĕн шанчăклă тĕрекĕ!

11. Творчествăллă мирлĕ ĕç тума Хĕрлĕ Çартан киле таврăнакан воинсене салам!

12. Сывă пулччăр пирĕн мухтавлă пограничниксем, совет чиккисен тимлĕ хуралçисем!

13. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Хĕрлĕ Çар воинĕсен семьисемшĕн тăрăшасси мĕнпур совет патриочĕсен таса тивĕçĕ пулса тăрать. Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе офицерĕсен семьисемшĕн пĕтĕм халăхпа тăрăшар!

14. Совет Союзĕн Геройĕсемпе Социализмлă Ĕç Геройĕсене—пирĕн Тăван çĕршывăн чи лайăх ывăлĕсене—мухтав!

15. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! 1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕ—СССР Верховный Советне суйламалли кун. СССР Верховный Совечĕн депутачĕсем пулма хамăрăн халăхăн чи лайăх ывăлĕсемпе хĕрĕсене суйлар! Суйлава ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илер!

16. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Нимĕçсем оккупацилесе аркатса хăварнă хуласемпе ялсене хăвăртрах юсаса ура çине тăратар!

17. Çĕркăмрăк промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Çĕркăмрăк кăларассине ӳстерсе пырăр, çĕршывăн халăх хуçалăхне кирлĕ таранах топливо парса тăрăр!

18. Нефть промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Нефть кăларассине ӳстерсе пырăр! Промышлĕнноçа, ялхуçалăхĕпе транспорта татти-сыпписĕр горючи парса тăрăр!

19. Хура тата тĕслĕ металлургири рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Çĕршывăн халăх хуçалăхĕ валли ытларах металл туса парăр!

20. Машинăсем тăвакан промышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Промышленноçпа ялхуçалăхĕ валли машинăсем туса кăларассине ӳстерсе пырăр! Совет Союзĕн машинăсем тăвакан техникине тăтăшах лайăхлатăр!

21. Транспорт машинисем тăвакан промышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Вагонсемпе паровозсем ытларах туса кăларар! Чугун çул транспортне хăвăртрах юсаса ура çине тăратар, ăна малалла аталантарса пырар!

22. Станоксем тăвакан заводсенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Станоксем туни—çĕршыва техникăпа хĕçпăшаллантармалли питĕ паха никĕс пулса тăрать. Станоксем ытларах туса кăларăр, вĕсен пахалăхне лайăхлатăр!

23. Çар промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Хĕрлĕ Çарăн боевой техникине лайăхлатăр! Совет Союзĕн хĕçпăшаллă вăйĕсен хăватне тĕреклетĕр!

24. Строительствăра ĕçлекен рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Нимĕç захватчикĕсем аркатса хăварнă предприятисене, пурăнмалли çуртйĕрсемпе культура учрежденийĕсене хăвăртрах юсаса ура çине тăратăр! Çĕнĕ домнăсене, мартенсене, шахтăсене, электростанцисене тата заводсене хăвăрт мĕтодсемпе ĕçлесе туса лартăр!

25. Электростанцисенчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Электростанцисен хăватне хăвăртрах ӳстерсе пырăр! Промышленноçа пĕр чарăнусăр ĕçлеме пулăшăр!

26. Вăрман промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Ытларах вăрман хатĕрлесе турттарса тухăр! Пирĕн çĕршывăн халăх хуçалăхне кирлĕ йывăç материалсене татти-сыпписĕр парса тăрăр!

27. Строительство материалĕсем тăвакан промышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Ытларах цемент, кирпĕч, кантăк туса кăларăр! Çĕнĕ предприятисемпе пурăнмалли çуртйĕрсене хăвăртрах тума пулăшăр!

28. Пир-авăр промышленноçĕпе çăмăл промышленноçри рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Халăх валли пир-авăр, трикотаж, урана тăхăнмалли япаласем туса кăларассине пур майсемпе те ӳстерĕр! Продукци пахалăхне лайăхлатассишĕн кĕрешĕр!

29. Вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Вырăнти ресурссемпе уса курас ĕçре ытларах пуçарулăх кăтартăр! Кулленхи кирлĕ таварсем туса кăларассине ӳстерĕр тата çав таварсен пахалăхне лайăхлатса пырăр!

30. Апат-çимĕç промышленноçĕнчи рабочисемпе работницăсем, инженерсемпе техниксем! Халăх валли апат-çимĕç продукчĕсем ытларах туса парăр!

31. Совет суту-илĕвĕпе перлешӳллĕ апатлану работникĕсем! Совет çыннисене лайăхрах пулăшассишĕн, ялпа хулари культурăллă суту-илӳшĕн кĕрешĕр!

32. Совет чугун çулĕн работникĕсем! Хĕллехи вăхăтра халăх хуçалăхĕ валли грузсем турттаракан поездсене хăвăртрах çӳретĕр! Чугун çулсем çинче дисциплинăпа организацилĕхе малалла çирĕплетсе пырассишĕн кĕрешĕр! Тăшман аркатса хăварнă чугун çулсене хăвăртрах юсаса пĕтерĕр!

33. Тинĕс флочĕпе юханшыв флочĕн работникĕсем! Çĕршывăн халăх хуçалăхĕ валли вăхăтра грузсем турттарса парăр!

34. Колхозниксемпе колхозницăсем, хресченсем, МТС-семпе совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, агрономсемпе зоотехниксем! Халăха ытларах апат-çимĕç, промышленноçа ытларах чĕртавар туса парар! Государствăна тырă памалли плана пĕтĕмпех тултарар!

35. Трактористсем, комбайнерсем, машинно-тракторнăй мастерскойсенче ĕçлекен рабочисем, МТС-семпе совхозсен механикĕсем! Тракторсене, ялхуçалăх машинисене тата тĕрлĕ ытти ĕçхатĕрĕсене вăхăтра та лайăх юсăр!

36. Колхозниксемпе колхозницăсем, хресченсем, совхозсенчи рабочисемпе работницăсем, агрономсем, зоотехниксемпе ветеринарсем! Выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерер! Выльăх-чĕрлĕх йышне малалла ӳстерсе пырар! Çĕршыва выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем ытларах парса тăрар!

37. Совет наукин работникĕсем! Çĕнĕ открытисем, изобретенисем, тĕпчев ĕçĕсем туса, наукăпа техникăна пуянлатса пырăр! Совет Союзĕнчи халăхсен хуçалăхĕпе культурине малалла аталантарса пырас ĕçре наука çитĕнĕвĕсемпе анлăнрах усă курар!

38. Совет литературипе искусствин работникĕсем! Аслă Совет халăхне тивĕçлĕ произведенисем çырса парăр!

39. Учительсемпе учительницăсем, халăха çутта кăларас ĕçĕн работникĕсем! Ачасене шкулта вĕрентес ĕçĕн пахалăхне ӳстерсе пырăр! Нумай пĕлекен тата культурăллă совет çыннисене, социализмлă Тăван çĕршывăн патриочĕсене воспитани парса çитĕнтерĕр!

40. Медицина работникĕсем! Сывлăхпа санитари учрежденийĕсен ĕçне лайăхлатăр! Халăха медицина енĕпе пулăшу парас ĕçĕн пахалăхне ӳстерсе пырăр!

41. Совет учрежденийĕсенчи служащисем! Совет законĕсене пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пырассишĕн кĕрешĕр, ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе нушисене тивĕçтерме тăрăшăр! Совет аппарачĕн ĕçне лайăхлатăр!

42. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Вăрçă кӳрсе хăварнă сурансене хăвăртрах тӳрлетер! Пурăнмалли çуртйĕрсене, шкулсемпе больницăсене, фабрикăсемпе электростанцисене, шахтăсемпе заводсене юсаса ура çине тăратар тата çĕнĕрен туса лартар!

43. Совет Союзĕнчи ĕççыннисем! Халăхăн пурнăç условийĕсене лайăхлатар! Хамăрăн хуласемпе ялсене лайăхлатса пырар!

44. Рабочисемпе служащисен пурнăçпа йăла тата культура тĕлĕшĕнчи ыйтăвĕсене тивĕçтерессишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшасси—профсоюз организацийĕсен хисеплĕ задачи пулса тăрать.

Сывă пулччăр совет профсоюзĕсем!

45. Сывă пулччăр совет хĕрарăмĕсем—пирĕн çĕршывăн хуçалăхпа культурăллă пурнăçне активлăн хутшăнса ĕçлекенскерсем!

46. Совет çамрăкĕсемпе хĕрĕсем! Хальхи вăхăтри техникăна, наукăпа культурăна ывăнма пĕлмесĕр вĕренсе пырăр! Хамăрăн Тăван çĕршывăн ырлăхĕшĕн вăя шеллемесĕр ĕçлĕр!

Сывă пулччăр совет çамрăкĕсем!

47. Совет шкулĕсенче вĕренекенсем! Комсомолецсемпе комсомолкăсем! Пионерсемпе пионеркăсем! Тăрăшарах вĕренĕр, Ленинпа Сталин ĕçĕшĕн паттăррăн кĕрешекенсем пулма хатĕрленĕр!

48. Коммунистсемпе комсомолецсем! Хамăрăн социализмлă государствăн вăй-хăватне малалла тĕреклетессишĕн кĕрешекенсен малти речĕсенче пулăр!

49. Сывă пултăр аслă Совет Союзĕ—пирĕн Тăван çĕршыври халăхсен телейĕпе мухтавлăхĕн шанчăклă тĕрекĕ!

50. Сывă пултăр ССР Союзĕн Конституцийĕ—социализмлă обществăн конституцийĕ! Сывă пултăр совет демократийĕ!

51. Сывă пултăр ССР Союзĕнчи халăхсен тăванла союзĕ тата ĕмĕр арканми туслăхĕ!

52. Сывă пултăр Пĕтĕм Союзри Коммунистсен (большевиксен) Партийĕ—пирĕн çĕнтерӳсене организацилекенĕ тата хавхалантараканĕ!

53. Сывă пултăр Совет халăхĕн çулпуçĕ—аслă Сталин!

54. Ленин ялавĕ айĕнче, Сталин юлташ ертсе пынипе, социализмлă строительствăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсем патне—малалла!

Сывă пултăр та чечеклене пытăр пирĕн аслă Тăван çĕршыв!

ПĔТĔМ СОЮЗРИ КОММУНИСТСЕН (большевиксен)
ПАРТИЙĔН ЦЕНТРАЛЬНЫЙ КОМИТЕЧĔ.

Репатриацин йĕркипе киле таврăннисемшĕн тăрăшаççĕ

ХАРЬКОВ, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Нимĕçсем ирĕксĕрлесе Германие хăваласа кайнă 8.000 çын Харьков хулине киле таврăннă. Вĕсем хушшинче квалификациллĕ рабочисем, инженерсем, врачсем, бухгалтерсем, архитекторсем, артистсем тата ыттисем те нумай. Ĕççынни депутачĕсен хулари тата районри Совечĕсемпе общественнăй организацисем вĕсемшĕн хытă тăрăшаççĕ. Киле таврăннă 6.000 çынна халĕ ĕçе вырнаçтарнă, нумайĕшне аслă шкулсемпе техникумсене вĕренме янă, хашпĕрисене тÿрлĕрен пулăшу панă.

Киле таврăннă Г. Сагомонов инженера Харьковри «Промтрансппроектăн» главнăй инженерĕ тунă. А. Тостолужский конструктор пĕр заводра хăйĕн специальноçĕпе ĕçлет.

Германирен таврăннă çĕршер çамрăк нимĕнле ĕçе те пĕлмен. Вĕсенчен нумайĕшĕ халĕ производство профессийĕсене вĕренсе çитсе квалификациллĕ рабочисем пулса тăнă.

Германи чуралăхĕнчен киле таврăннă çынсем хушшинче агитациллĕ-политикăллă ĕçе туса пыраççĕ, халĕ вĕсене «СССР Верховный Советне суйламалли Положенипе» анлантарса параççĕ.

ГРИГОРИЙ МОРОЗОВ 800 ĔÇКУНĔ ТУНĂ

ШĂХАСАН. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхоз членĕ Григорий Морозов колхозра питĕ тăрăшса ĕçлет. Халĕ вăл 68 çула çитнĕ. Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче вăл çулталăкне 700-шер ĕçкунĕнчен кая туман.

Кăçал Морозов юлташ тăван Хĕрлĕ Çар нимĕç фашисчĕсене çапса аркатнишĕн савăнса татах та тăрăшарах ĕçленĕ. Унăн ĕç кĕнеки çинче паянхи куна 800 ĕçкунĕ шутланать. Çав ĕçкунĕсемшĕн ăна сахалтан та 1500 килограмм тĕштырă тивет.

СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав Комиссийĕнче

Кăçалхи октябрĕн 27-мĕшĕнче СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав Комиссийĕн пĕрремĕш ларăвĕ пулнă.

Тĕп суйлав Комиссийĕ СССР Верховный Советне суйлама хатĕрленес тĕлĕшпе тумалли ĕçсене сӳтсе-явнă, «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» тăрăх, тивĕçлĕ решенисем йышăннă.

Тĕп суйлав Комиссийĕ суйлав документчĕсен формисене йышăннă: Союз Советне суйламалли суйлав бюллетеньне (вăл шурă тĕслĕ пулать); союзлă республикăсенчен Национальноçсен Советне суйламалли суйлав бюллетеньне (вăл кăвак тĕслĕ пулать); автономиллĕ республикăсенчен, автономиллĕ облаçсенчен тата наци округĕсенчен Национальноçсен Советне суйламалли суйлав бюллетеньне (вăл кĕрен тĕслĕ пулать); округри суйлав комиссийĕ депутата суйлама тăратнă кандидатсене регистрацилени çырмалли протокол формине: участокри тата округри суйлав комиссийĕсенче суйлани çырмалли протокол формине тата Союз Совечĕпе Национальноçсен Советне депутата суйлани çинчен паракан удостоверени формине йышăннă.

Тĕп суйлав Комиссийĕ Тĕп суйлав Комиссийĕн, Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен союзлă тата автономиллĕ республикăсенчи автономиллĕ облаçсемпе наци округĕсенчи суйлав комиссийĕсен, Союз Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕсемпе Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссийĕсен тата участоксенчи суйлав комиссийĕсен пичечĕсен образецĕсене пăхса тухса йышăннă.

Тĕп суйлав Комиссийĕ çапла йышăннă: участоксенчи суйлав комиссийĕсен пичечĕсене центрта тумалла; союзлă тата автономиллĕ республикăсенчи, автономиллĕ облаçсенчи, наци округĕсенчи Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисен пичечĕсемпе Союз Советне тата Национальноçсен Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен округри суйлав комиссисен пичечĕсене вырăнтах тумалла.

Тĕп суйлав Комиссийĕ сасăламалли суйлав ещĕкĕн образецне йышăннă: ещĕке йывăçран тăваççĕ, унăн çӳллĕшĕ — 85 сантиметр, сарлакăшĕ 50 сантиметр, урлăшĕ—40 сантиметр пулмалла, ещĕкĕн хуппи çĕкленсе уçăлать, унта бюллетеньсене яма шăтăк пулать; ещĕкпе ещĕк хуппин те сургучпа пичетлеме металлран тунă ункăсем пулаççĕ. Çакăн пек ещĕксене вырăнтах тумалла.

Тĕп суйлав Комиссийĕ СССР Çыхăну Халăх Комиссариачĕ умне округри суйлав комиссийĕсене участоксенчи пур суйлав комиссийĕсемпе те çыхăнтарма тивĕçлĕ телеграф, телефон тата ытти тĕрлĕ çыхăну хатĕрĕсем туса пама ыйту кăларса тăратнă.

Тĕп суйлав Комиссийĕ суйлав иртерме кирлĕ таран хут парас ыйтăва тата суйлав документчĕсене пичетлесе хатĕрлес ыйтăва пăхса тухнă.

СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав Комиссийĕ пĕлтерни

СССР Верховный Советне суйлас тĕлĕшпе ĕçлекен Тĕп суйлав Комиссийĕн адресĕ çакăн пек: Москва, Дом Союзов, Пушкинская улица (бывшая Большая Дмитровка), 9-й подъезд, 2-й этаж. Телефон: К—5—74—08.

СУЙЛАВ ПОЛОЖЕНИНЕ ĂНЛАНТАРАÇÇĔ

ШĂХАСАН. Атнашри Киров ячĕпе тăракан колхозри агитаторсем «СССР Верховный Советне суйламалли Положени» пичетленсе тухнă хыççăнах ăна тимлĕн вуласа тухрĕç. Парти пуçламĕш организацийĕн секретарĕ С. Осипов юлташ пуçарнипе суйлав Положенине вĕренмелли кружок организацилерĕç. Кружокра 32 агитатор вĕренеççĕ. Агитколлектив руководителĕ пулса çичĕ çул вĕренмелли шкул директорĕ Ананьев юлташ ĕçлет. Суйлав Положенине вĕренмелли кружокăн занятийĕсем кун сиктерсех пулса иртеççĕ. Ку таранчченчĕ çитсе 4 заняти пулнă.

Н. Мыльников агитатор суйлав Положенине ăнлантарас тĕлĕшпе пахчаçимĕç бригадинче 3 заняти иртгерчĕ. Бригадăри колхозниксен пухăвне пухса Верховный Совета суйламалли йĕркепе паллаштарчĕ.

Парти членĕ С. Евдокимов юлташ килĕрен çӳресе суйлавçăсене Положение ăнлантарса парать.

Пуçламĕш парти организаци çумĕнче «Кировец» хаçат тата бригадăсенчи боевой листоксем те тухрĕç. Вулав сурчĕн пуçлăхĕ Н. Алексеев юлташ суйлавсем çинчен 5 лозунг çырса çапрĕ.

Çапла вара, Атнашра суйлав Положенине ăнлантарас тĕлĕшпе 32 агитатор ĕçлет. Вĕсем пурте коммунистсемпе комсомолецсем.

Шăхасан районĕнчи «Заря» колхозăн агитколлективĕ СССР Верховный Советне суйламалли Положенине вĕренет. Суйлав Положенине вĕренме кашни бригадăранах икшер агитатор çӳреççĕ. Суйлав Положенийĕпе пĕрлех вĕсем СССР Конституцине, Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсен пухăвĕнче 1937 çулхи декабрĕн 11-мĕшĕнче Сталин юлташ тухса каланă сăмаха вĕренеççĕ. Хăйсем вĕреннĕ вăхăтрах агитаторсем суйлав Положенийĕ çинчен колхозниксене ăнлантарса пама тытăннă.

СССР Верховный Советне депутатсем суйлама хатĕрленнĕ май кунта ятарласах стена хаçачĕ кăларнă, бригадăсенче колхозниксен пухăвĕсене иртгернĕ. Вулав сурчĕ çумĕнче Советсен суйлавĕ çинчен калакан кĕнекесене пухса, куçса çӳрекен уйрăм библиотека организациленĕ.

* * *

ИШЛЕЙ. СССР Верховный Советне суйламалли Положенине вĕренесси Кипечкасси ял Советĕнчи «Большевик» колхозра лайăх пырать. Ăнлантару ĕçне комсомолецсемпе комсомолкăсем туса пыраççĕ.

Комсомолка Р. Замятина юлташ 1-мĕш бригадăра, Г. Пайманов—2-мĕш бригадăра, Д. Спиридонов—3-мĕш бригадăра, М. Фомина—выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес енĕпе ĕçлекен работниксем хушшинче «Положение» тĕплĕн сӳтсе-явнă.

СССР Верховный Советне суйламалли Положенипе паллашнă май, бригадăсенче кĕрхи ĕçсене пĕтĕмпех вĕçлессишĕн кĕрешеççĕ.

В. ЧИГАРКИН.

Машинистсен Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăвĕ

КАНАШ. Паровоз деповĕнчи машинистсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса стахановла вахтăна тăчĕç. Çак кунсенче П. Леонтьев машинист Канашпа Çĕмĕрле хушшинчи чугун çул тăрăх йывăр поезда илсе каяс тĕлĕшпе техника хăвăртлăхне графикран иртгерсе 7 километра çити ӳстернĕ, паровоз çаврăнăшне 3 сехете çити чакарнă. Паровозăн талăкри вăтам чупăвне 70 километр таран ӳстерсе, состава вăл расписанирен кăтартнинчен 2 сехет маларах илсе çитернĕ. Çак участокрах М. Туканов машинист тавар поездне пысăк хăвăртлăхпа илсе çӳрет, вăл техника хăвăртлăхне 3 километр таран, талăкри вăтам чупăва 149 километра çити ӳстернĕ.

Ăмăртса ĕçлеççĕ

Шупашкарти конфетсем тăвакан фабрикăра ĕçлекенсем Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртăва хутшăнса хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пыраççĕ. Кунта бригадăпа бригада, цехпа цех ăмăртса ĕçлеççĕ, вĕсем пĕр-пĕрин хушшинче социализмлă ăмăрту договорĕсем тунă. Фабрика коллективĕ макарон фабрикинче ĕçлекенсемпе ăмăртса ĕçлет. Октябрь уйăхĕнче венски цехпа конфетсем тăвакан цех иккĕшĕ те тухăçлă ĕçлеççĕ, вĕсем çак уйăхри 20 кунри задание кашниех 85-шер процент тултарчĕç.

Венски цехра уйрăмах Г. Петрова, Н. Хрипунов, А. Серова тата Егорова стахановецсем тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем нормăна кулленех 130—150 процента çити тултарса пыраççĕ.

Конфетсем тăвакан цехра мастер Н. Никитина пысăк пултарулăхпа ĕçлет. Вăл кăçал 10 çынна ĕçе вĕрентнĕ. Ку цехри А. Никитина, А. Колесова тата П. Григорьева работницăсем кулленхи нормăна 120—150 процент тултарса ĕçлеççĕ.

◆

ФЗО ШКУЛĔСЕНЕ ВĔРЕНМЕ КĔРĔР!

Эпир Сĕнтĕрвăрринчи Судоверфь çумĕнчи ФЗО шкулне хамăр ирĕкпе заявлени парса кĕтĕмĕр.

Кунта вĕренме кĕриччен эпир ФЗО шкулĕн условийĕсем çинчен пачах та пĕлмен. Халĕ, вĕренме кĕнĕрен вара, шкул условийĕсемпе лайăх паллашса çитрĕмĕр, шкул пурнăçне ытларах та ытларах юратса пыратпăр. Эпир кунтан лайăх вĕренсе тухса тинĕс флочĕн порчĕсенче е верфĕсенче ĕçлесе, хамăрăн Тăван çĕршыва усăллă çынсем пулма ĕмĕтленетпĕр.

Вĕренекенсем валли шкулта условисем лайăх. Вĕренме кĕнĕ-кĕменех кĕпе-тумтирсем параççĕ. Общежитин ăшă та çутă, сывăрмалли вырăнсем таса. Классене, çар кабинетне, хĕрлĕ кĕтесе лайăх йĕркеленĕ. Пур çĕрте те электричество ламписем çунаççĕ. Талăкра виçĕ хут пире вĕри апат çитереççĕ. Канмалли кунсене те лайăх иртеретпĕр: библиотекăран кĕнекесем, хаçатсем илсе вулатпăр, радио итлетпĕр, доминолла, шашкăпа шахмăтла тата биллиардла вылятпăр. Музыка инструменчĕсем те пур. Шкулта хор кружокĕ тата ытти кружоксем организациленĕ.

Ялти ачасене ФЗО шкулĕсене ноябрĕн 15-мĕшĕччен илеççĕ.

Çамрăксем, ФЗО шкулĕсене кĕме васкăр, промышленноçпа транспортра ĕçлеме вĕренсе хатĕрленĕр!

АНТИПОВ, ШУМОВ, ЕРМАКОВ, ВАСИЛЬЕВА.

Совет çĕршывĕ тăрăх

КАРПАТ ЛЕШ ЕНЧИ УКРАИНĂРА СУЙЛАВА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

УЖГОРОД, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Карпат леш енчи Украинăри ĕççыннисем Совет Союзĕн государство йĕркипе, унăн суйлав йĕркипе, гражданисен çитес суйлаври прависемпе тата обязанноçĕсемпе питĕ хытă интересленеççĕ. СССР Конституципе тата СССР Верховный Советне суйламалли Положение вĕренме хуласемпе ялсенче кружоксем тăваççĕ.

Ужгородпа Мукачево хулисенче агитколлективсен семинарĕсем пулса иртнĕ. Халăх хушшинче массăллă-политикăллă ĕçе 400 агитатор туса пыраççĕ.

СССР Верховный Советне суйламалли Положение тата СССР Конституцине çак кунсенче уйрăм кĕнеке туса пичетлесе кăлараççĕ.

СССР МЕДИЦИНА НАУКИСЕН АКАДЕМИЙĔН СЕССИЙĔ

Октябрĕн 28-мĕшĕнче Мускаври Ученăйсен çуртĕнче СССР Медицина наукисен академийĕн иккĕмĕш сессийĕ уçăлнă. Ларусем иртермелли залра совет медицинин паллă представителĕсем пухăннă. Кун йĕркинче—Академи ĕçĕсен малтанхи итогне сӳтсе-явасси, академин действительнăй членĕсене хушса суйласси тата член-корреспондентсене суйласси. Кунсăр пуçне, Академи сессийĕ пухăннисем наукăлла 18 доклад итлеççĕ.

Академин малтанхи çулĕнчи ĕçĕн итогĕсем çинчен тата СССР Медицина наукисен академине малалла аталантармалли плансем çинчен академи секретарĕ Парин профессор доклад туса панă.

Академин пилĕкçуллăх планĕ СССР Наркомздравĕн пилĕкçуллăх планĕпе питĕ таччăн çыхăнса тăрать, тенĕ Парин профессор. Ерекен чир-чĕрсемпе кĕрешесси çине, медицинăпа санитари ĕçне вăрçă кӳрсе хăварнă сурансене хăвăртрах тӳрлетесси çине, вăрçă вăхăтĕнче медицина работникĕсем пухнă опыта пĕтĕçтерсе усă курасси çине уйрăмăнах хытă çаврăнса пăхмалла пулать. Академи институчĕсен хăйсен умне лартнă задачăсене татса памалла пулать.

Сесси ĕçĕ малалла пырать. (ТАСС).

ПĔР КУНТА 31.600 КИРПĔЧ

Кăнтăр-хĕвеланăç чугун çулĕн Дарница станцинчи каменщик Рахманин пĕр сменăра 30.000 кирпĕч яхăн хывнă хыççăн чугун çулăн каменщикĕсем хушшинче социализмлă ăмăрту сарăлса кайнă. Çав ăмăртăва хутшăнса, Белоруссири чугун çулăн строительство участокĕнчи каменщик Митрофан Бранхилов, хăйне пулăшакан виçĕ рабочипе пĕрле, хăйĕн ĕç сменинче 31.600 кирпĕч хывнă.

ТУТАР РЕСПУБЛИКИНЧЕ НЕФТЬ ТУПНĂ

Шугурово çывăхĕнче нефть шырас тĕлĕшпе çĕре 1.011 метр таранĕш пăраласа шăтарнă. Çакăн таранăшĕнче вара нефть паллăлăхне асăрханă. Тĕрĕслесе пăхнă чухне çав пăраласа шăтарнă шăтăкран нефть фонтанĕ сирпĕнсе тухнă. Унтан талăкне 75 тонна таран нефть пухнă.

Çакăнта халĕ темиçе шăтăкран нефть кăлараççĕ. Тăпран аялти сийĕсенче нефть татах та нумайрах пулмалла.

Нефть промышленноçĕн наркоматĕнчи Шугуроври нефть пирки «Правда» корреспондентне çапла каланă:

— Тутар АССР-ĕ «Иккĕмĕш Баку» татах тепĕр районĕ пулса тăрать. Шугурово çывăхĕнче нефть пуррине унта темиçе шăтăкран нефть кăларни те çирĕплетсе парать. Халĕ унта ĕнтĕ нефтепромысел тăваççĕ. Çака вăл Тутар республикинчи пĕрремĕш нефтепромысел пулса тăрать. Кунта 32 километр тăршшĕ нефтепровод тата 10 километр тăршшĕ водопровод тăваççĕ.

АБХАЗИРЕ ЦИТРУС ÇИМĔÇĔСЕНЕ ПУХМА ТЫТĂННĂ

СУХУМИ, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). «Эшери» совхозра лимонсем пухма тытăннă. Халĕ 30.000 лимон татса пухнă. Грузири цитрус хуçалăхĕсенче ытти[illegible] те çимĕçсем пухма хатĕрленеççĕ.

КОЛХОЗСЕНЧИ УЯВ УМĔНХИ ÇĔКЛЕНӲ

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. «Путь социализма» колхоз Аслă Октябрь уявĕнхи социализмла ăмăртура пысăк çитĕнӳсем турĕ. Колхоз государствăна тыра пама тыра вырма пуçлана тапхăртах тытăнчĕ. Авăн çапас тата хатĕрлев пунктне тырă леçес ĕçсене лайăх организацилени колхоза государствăна тыра памалли обязательствăна октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлнех тултарма май пачĕ. Колхоз планран ирттерсе Хĕрлĕ Çар фондне 30 центнер тырă леçрĕ, кĕлте турттарса капана хывас тата çĕрулми кăларас ĕçсене те октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлнех вĕçлерĕ. Халĕ колхозра авăн çапас ĕç хĕрӳллĕн пырать. Ку ĕçре колхозри икĕ бригадăра та молотилкăсем йĕркеллĕ ĕçлеççĕ. Витнĕ итемсем пур пирки йĕпе-сапа вăхăтĕнче те колхоз икĕ сменăпа авăн çапма пултарать.

Авăн çапас ĕçре Ф. Лаптев юлташ ертсе пыракан 1-мĕш бригада малта пырать. Ку бригадăн çапмалли ыраш кăна юлнă. Çапнă культурăсен тухăçлăхĕ те пысăк. Тулă гектартан 15 центнер тухать. Лаптев юлташ бригадине ĕçшĕн хушса тӳлеççĕ.

Ăмăрту ĕçĕсене кăтарту хăми çине çырса пыраççĕ. Ăмăртура Е. Богатеева, П. Сапожникова, А. Матвеева, О. Ярлова колхозницăсем пур ĕçре те малта пыраççĕ. Вĕсем лайăх ĕçленине пула колхоз авăн çапнă çĕрте кулленхи графика 120—123 процент тултарса пырать.

Колхоз уява государство умĕнчи мĕнпур парăмсене парса татнине кĕтсе илет. Выльăх-чĕрлĕх продукчĕсене памалли плана октябрĕн 5-мĕшĕ тĕлнех тултарнă. Çĕрулмипе пахчаçимĕçсем памалли плана ытлашшипех тултарса, колхоз хăйĕн членĕсене кашни ĕçкунĕ пуçне 4-шар килограмм çĕрулми, 100-шер грамм купăста тата ытти пахчаçимĕçсем те валеçсе панă.

Колхозра агитациллĕ-массăллă ĕçе те лайăх йĕркеленĕ. Агитаторсенчен уйрăмах П. Илларионов, Н. Васильев юлташсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсем халĕ колхозниксене «СССР Верховный Советне суйламалли Положение» ăнлантарса параççĕ.

П. ТИХОНОВ.

КОМСОМОЛЕЦСЕМ ТĂРĂШСА ĔÇЛЕÇÇĔ

ЕЛЧĔК. Кармалти Киров ячĕпе тăракан колхозри комсомолăн пуçламĕш организацийĕнче (секретарĕ А. Столярова юлташ) 7 комсомолец. Кунти комсомолецсем пурте колхозра тăрăшса ĕçлеççĕ.

2-мĕш бригадăри А. Никитин тата Г. Краснов комсомолецсем тырă вырнă вăхăтра машинистсем пулса ĕçлерĕç. Жнейкăпа куллен 5-шер гектар вырас вырăнне 7—8-шар гектар вырса пычĕç. Çапла вĕсем кăçал хăйсем кăна 200 гектар тырă вырнă, кунсăр пуçне, 1-мĕшпе 3-мĕш бригадăсене те чылай тырă вырса парса пулăшнă. Халĕ вĕсем транспорт бригадинче ĕçлеççĕ, Заготзерно пунктне тырă леçеççĕ. Колхоз çак кунсенчех государствăна тырă парса татать.

Колхозра комсомолецсемпе çамрăксен уйрăм бригади пур. Ку бригада авăн çапнă çĕрте ĕçлерĕ, лаша вăйĕпе ĕçлекен молотилкăпа куллен 80—90 центнер тырă çапрĕ. Ку бригадăна комсомолец Н. Тимофеев юлташ ертсе пырать.

Кунти комсомолецсем ĕçленĕ хушăрах агитаци ĕçне те аван туса пыраççĕ. Колхозниксем хушшинче калаçусем ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ. Кунсăр пуçне, кашни бригадăрах 5 кунта пĕрер боевой листок тухса тăрать, тырпул пухса кĕме тухнăранпа 5 номер стена хаçачĕ кăларнă.

М. ЕГОРОВ.

24.935 ÇĂМАРТА ИЛНĔ

Калинино районĕнчи Юманай ялповĕн хатĕрлев агенчĕ К. Шатаев юлташ кăçал 24.935 çăмарта пухса хăйĕн планне 210 процента яхăн тултарнă.

Суйлав законĕ çинчен пĕлсе тăма

5. Сасăламалли йĕрке

СССР Верховный Советне пĕтĕм çĕршывĕпех пĕр кун хушшинче, вырăнти вăхăтпа ирхине 6 сехетрен пуçласа çĕрле 12 сехетчен, канмалли кун—1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче суйлаççĕ.

Суйлав Положенийĕнче палăртса хунă тăрăх, кашни суйлавçă суйлава хутшăнса хăйĕн кăмăлне ирĕклĕн палăртма пултартăр тесе, пур майсене те туса панă.

Кунта чи малтан суйлав участокĕсем çинчен каласа хăвармалла. Пĕр-пĕр суйлав округне кĕрекен хулапа районра е ялта суйлав бюллетенĕсене йышăнма тата сасăсене хисепе илме суйлав участокĕсем туса хураççĕ. Çав суйлав участокĕсем Союз Советне суйлама та, Национальноçсен Советне суйлама та пĕрех пулаççĕ. Пĕр-пĕр хулара е ялта 2.000 çынран ытларах халăх пурăнать пулсан, 1.500—3.000 çын халăхран пĕр суйлав участокĕ тăваççĕ.

Çурçĕрте, халăх сахал пурăнакан вырăнсенче, больницăсем, ача çуратмалли çуртсем, санаторисемпе инвалидсен çурчĕсем çумĕнче, 50 çынран кая мар суйлавçă пулсан, закон уйрăм суйлав участокĕсем тума ирĕк парать. Суйлав кунĕнче ишме тухнă карапсемпе суднăсем çинче 25 суйлавçăран кая мар пулсан, уйрăм суйлав участокĕ тума пултараççĕ.

Суйлав участокĕсене суйлавсем пуличчен 45 талăк маларах туса хураççĕ. Хăш кун тата суйлама ăçта каймалли çинчен суйлавçăсене малтанах пĕлтереççĕ. Суйлавсем умĕнхи юлашки 20 кун хушшинче Участокри суйлав комиссийĕ тата агитаторсем кулленех суйлавсем ăçта, хăçан, миçе сехетре пулмалли çинчен суйлавçăсене ăнлантарса параççĕ.

1946 çулхи февралĕн 10-мĕшĕнче ирхине 6 сехетре суйлав пункчĕсен алăкĕсене уçаççĕ. Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ, комисси членĕсен умĕнче суйлав ещĕкĕсене тата суйлавçăсен списокне тĕрĕслесе пăхнă хыççăн, суйлав ещĕкĕсене хупса, суйлавçăсене хăйсен гражданла тивĕçлĕхне пурнăçа кĕртме чĕнет.

Кашни суйлавçă суйлав участокне хăй пырса сасăлать. Вăл чи малтан Участокри суйлав комисси членне хăйĕн документне—паспорт, колхоз членĕн кĕнекине, профсоюз членĕн билетне е хăй камне пĕлтерекен урăх йышши удостоверение — кăтартать. Çавăнтах суйлав списокĕ тăрăх суйлавçăн ятне шырса тупаççĕ те, списокра паллă тунă хыççăн, суйлавçăна виçĕ бюллетень—пĕрни Союз Советне суйламалли, иккĕмĕшĕ—Национальноçсен Советне суйламалли—параççĕ.

Бюллетеньсене илнĕ хыççăн суйлавçă бюллетеньсене тултарма уйрăм пӳлĕме кĕрет.

Сасăланă вăхăтра çав пӳлĕмре, сасăлакансăр пуçне, никам та, вăл шутрах Участокри суйлав комисси членĕсем те, пулма пултараймаççĕ.

Суйлав Положенийĕнче бюллетеньсене епле тултармалли çинчен тĕплĕн каласа панă. «Положенин» 79-мĕш статьинче çапла каланă: «Суйлавçă, суйлав бюллетенĕсене çырса тултарма уйăрнă пӳлĕмре, кашни суйлав бюллетенĕнче хăй камшăн сасăлама кăмăл тăвать, çав кандидатăн хушаматне хăварать, ыттисене хуратса хурать, унтан суйлавçă Участокри суйлав комиссийĕ ĕçлекен пӳлĕме пырать те суйлав бюллетенĕсене суйлав ещĕкне ярать».

Суйлав пыракан пӳлĕмре сасăланă вăхăтра суйлав агитацийĕ тума, кандидатсемшĕн агитацилеме юрамасть.

Çапла вара суйлавçăсем суйлав бюллетеньне суйлав ещĕкне ярса сасăлаççĕ. Пирĕн суйлав йĕрки сасăлас ĕçĕн вăрттăнлăхне упрама май панине пула, бюллетеньсене конверта чикме кирлĕ те мар.

Хут пĕлмен е суккăр суйлавçăсем епле майпа сасăлама пултараççĕ-ха?

Ку енĕпе те пирĕн суйлав законĕ суйлавçăсемшĕн çав тери тăрăшнине курма пулать. Суйлав Положенийĕн 80-мĕш статьинче çапла каланă: «Хут пĕлмен пирки е чăлах пирки суйлав бюллетенĕсене хăйсем çырса тултарма пултарайман суйлавçăсем суйлав бюллетенĕсене çырса тултармалли пӳлĕме кирек хăш урăх суйлавçăна та суйлав бюллетенĕсене çырса тултарма чĕнсе кĕртме пултараççĕ», тенĕ.

Пирĕн суйлав законĕнче тата ятарласах суйлав бюллетенĕсене суйлав округне кĕрекен халăх калаçакан чĕлхепе пичетлемелли çинчен каласа хăварнă.

Капитализмлă çĕршывсенче ун пек тумаççĕ. Унта государство чĕлхине пĕлмен пирки е хутла пĕлмен пирки миллионшар ĕççыннисене суйлавран пăрса хăвараççĕ.

Суйлав кунĕнче хăш-пĕр суйлавçăсем урăх çĕре тухса кайма пултараççĕ е суйлавçăсен списокне тунă хыççăн суйлавсем пулса иртиччен урăх вырăна куçма пултараççĕ. Çавăн пек суйлавçăсем епле майпа сасăлама пултараççĕ-ха? Тухса каяс умĕн вĕсем ĕççынни депутачĕсен Совечĕн исполкомĕнче «Суйлама ирĕк паракан удостоверени» илме тивĕçлĕ. Çав удостоверени тăрăх, урăх çĕре пыракан суйлавçăна Участокри суйлав комиссийĕ çавăнтах суйлавçăсен списокне кĕртет.

Çапла вара совет законĕсем кашни суйлавçăнах суйлава хутшăнма май туса параççĕ.

Законра каланă тăрăх, Участокри суйлав комиссийĕн председателĕ суйлав пыракан пӳлĕмри пĕтĕм йĕркешĕн ответлă пулса тăрать. Унăн распоряженийĕсене пурин те пурнăçа кĕртсе пымалла.

12 сехетре çĕрле сасăлас ĕç вĕçленет. Участокри суйлав комиссийĕ суйлав ещĕкĕсене уçма тытăнать тата кашни кандидатшăн мĕн чухлĕ сасă панине шутлама пуçлать.

Çапла вара тĕнчере чи демократиллĕ Сталинла Конституци çинче никĕсленсе тăракан суйлав законĕ совет гражданĕсене суйлава хутшăнтарас тĕлĕшпе мĕн кирлине пурне те туса парать.

Рабочисем пурăнмалли çуртсене хĕле хатĕрленĕ

ÇĔМĔРЛЕ. «Большевик» завод рабочисем пурăнакан коммунальнăй çуртсене хĕле хатĕрлес тĕлĕшпе пысăк ĕçсем турĕ. Планпа пăхнă пур ĕçсене те туса пĕтернĕ.

Виçĕ çурт тăррине витнĕ, коридорти пусмасене юсанă. 43 кăмака, 229 алăк юсанă. Çуртсенче пурăнакансен вăйĕпе кăна 102 хваттере ăшă тытмалла тунă.

Кунсăр пуçне 4 пӳрт тăррине, икĕ çуртри шыв пăркисене, хуçалăх пайĕн общежитийĕсене, поселокри çуртсенчи электричество линине, ОРС-ăн магазинĕсемпе базине, ача сачĕсене, сарайсене юсаса йĕркеленĕ.

Завод тулашĕнче 6 çĕрте шыв ăсмалли колонкăсене юсанă. Нумай хваттерсене штукатуркăласа шуратнă. Рабочисем пурăнакан çуртсем тавра çуркунне 1.600 тĕп акаци лартнă, 480 метр тăршшĕ тротуар сарнă, 450 метр тăршшĕ икĕ аяккипе канавсем алтса, çине 15—20 сантиметр хулăмĕш шлак сарса çӳремелли çул тунă. Çак пĕтĕм ĕçсене тума 55.955 тенкĕ пĕтернĕ.

Асăннă ĕçсен пахалăхне тĕрĕслесе йышăнма завод администрацийĕ парткомпа завком представителĕсенчен ятарласа комисси уйăрнă. Иртнĕ кунсенче комисси çав тунă пĕтĕм ĕçсене пăхса тухса акт тăрăх йышăннă.

Ан. ТАНЬКОВ.

РЕСПУБЛИКА ТĂРĂХ

ĔÇКУНĔ ТĂРĂХ ТЫРĂ ПАРАÇÇĔ

ВĂРМАР. «Хĕрлĕ Шептах» колхоз кăçал ялхуçалăх ĕçне ăнăçлăн вĕçленĕ. Государство умĕнчи парăмсене те вăхăтра парса татнă.

Колхозăн колхозниксене валли те тырпул çителĕклĕ. Халĕ вĕсем колхозниксене аванс шучĕпе ĕçкунĕ пуçне 620-шер грамм тĕштырă, пĕрер килограмм çĕрулми панă, татах 1870-шер грамм тĕштырă, 600—700-шер грамм пахчаçимĕç, пĕрер тенкĕ укçа пама шутлаççĕ.

БЫЧКОВ КОМСОМОЛЕЦ 34 ГЕКТАР СУХАЛАНĂ

СĔНТĔР. Калайкасси ял Советĕнчи «Гигант» колхозри комсомолец Бычков кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе ăмăртăва хутшăнса пысăк çитĕнӳ тунă. Ăмăрту условийĕ тăрăх, кĕрхи çĕртме тумалли сезонра икĕ касăллă плугпа 32 гектар сухаламалла пулсан, вăл 34 гектар сухаланă. Çапла вара Бычков комсомолец кĕрхи çĕртме тăвас тĕлĕшпе пынă ăмăртура районра мала тухнă çамрăк сухаçăсенчен пĕри шутланать.

СПОРТ ЗАЛĔ ТУНĂ

ЕЛЧĔК. Çĕнĕ Пăвари вăтам шкулта çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçлансанах çар ĕçне вĕренмелли спорт залĕ тунă. Зала лайăх тирпейленĕ. Стенасем çумне тĕрлĕрен картинăсемпе лозунгсем тата портретсем çакса илемлетнĕ, хĕрлĕ кĕтессем тунă.

Спорт залĕнче икĕ турник, швецки стена, кольцо тата ыттисене те вырнаçтарнă. Унтах çар ĕçне вĕрентмелли пособисен кĕнекесем те пур.

Ӳкерчĕк çинче: зенитнăй тупă наводчикĕ старши сержант **К. Т. Сергеев.** Ăна III-мĕш степень Мухтав орденĕпе тата медальсемпе наградăланă. Вăрçăччен вăл Улатăрта ĕçленĕ.

Л. СОРОКА фотоӳкерчĕкĕ
(ТАСС фотохроники).

КОЛХОЗСЕНЧИ ÇĔНĔ ПАРТОРГАНИЗАЦИСЕМ

ВКП(б) Чкаловски райкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, Туçари Чкалов ячĕпе тăракан колхозра партин пуçламĕш организацине тата Чăваш Ишекре территориллĕ пуçламĕш организацине тунă.

Чи паха пьесăсене чăвашла куçараççĕ

ЧАССР Совнаркомĕ çумĕнчи Искусство ĕçĕсен Управленийĕ вырăс классикĕсем тата хальхи писательсем, çавнашкалах тата хĕвеланăçĕнчи драматургсем çырнă чи паха пьесăсене чăвашла куçарттарма тытăннă. Малтанлăха çаксене куçарма йышăннă: Фонвизин—«Недоросль», Островский—«Гроза», Гоголь—«Ревизор», Н. Погодин—«Человек с ружьем», Леонов—«Нашествие», Шекспир—«Ромео и Джульетта» тата ыттисене те. Çак произведенисене чăвашла куçарас тĕлĕшпе халь И. Тукташ, А. Кăлкан, Л. Агаков, П. Хузангай, Г. Молостовкин, И. Максимов-Кошкинский ĕçлеççĕ.

«АСЛА ÇĔНТЕРӲ»

Çавăн пек ятпа Чăвашгосиздат ялти драмкружоксене валли çĕнĕ эстрада сборникĕ кăларма хатĕрлет. Сборнике И. Максимов-Кошкинскин, Н. Айзманăн, Н. Луковскин çĕнĕ пьесисем, Л. Агаковăн, Никитинăн фельетонĕсем, И. Тукташăн, А. Эсхелĕн, С. Эльгерăн, П. Хузангайăн, С. Шавлын тата ыттисен сăвисем кĕреççĕ.

УПА ТЫТНĂ

Сĕнтĕрвăрринчи лесхозра ĕçлекен 52 çулхи сунарçă И. И. Филиппов юлташ нумай пулмасть Октябрьски районри Карапаш ялĕ çывăхĕнчи вăрманта упа тытнă. Упи 16 пăт таять. Филиппов юлташ ĕнтĕ 40 çула яхăн сунара çӳрет. Хăй ĕмĕрĕнче вăл мĕнпурĕ 5 упа тытнă.

Ф. ИЛЬИН.

ПЕЧЕНГА (ПЕТСАМО) ОБЛАÇĔН УЧАСТОКĔНЧЕ СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ФИНЛЯНДИ ХУШШИНЧИ ЧИККЕ ПАЛĂРТСА ПĔТЕРНĔ

Печенга (Петсамо) облаçĕн участокĕнче Совет Союзĕпе Финлянди хушшинчи чикке палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен Совет Союзĕпе Финляндин хутăш комиссийĕ хăйĕн ĕçне пĕтернĕ. Октябрĕн 26-мĕшĕнче Совет Союзĕн делегацийĕ тата Финлянди делегацийĕ çав чикĕ йĕрне кăтартакан документсене алă пуснă.

Çавăнпа пĕр вăхăтрах Совет Союзĕпе Финляндин çав хутăш комиссири делегацийĕсен представителĕсем тата Норвеги представителĕ тепĕр протокола алă пуснă. Ку протоколта Совет Союзĕ, Финлянди тата Норвеги чиккисем пĕрлешнĕ вырăна кăтартса панă.

Чикке кăтартса панă документсене алă пуснă хыççăн совет делегацийĕн председателĕ А. М. Александров советник йышăну туса ирттернĕ. Йышăнура çаксем пулнă: Финляндин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ К. Энкель, Совет Союзĕн Финляндири посолĕ Ф. Д. Орлов, хутăш комиссири Совет Союзĕпе Финлянди делегацийĕсем, Норвеги представителĕ К. Глеич тата ыттисем те.

ПĔРЛЕШНĔ НАЦИСЕН ХАТĔРЛӲ КОМИССИЙĔН ĔÇ ТĂВАКАН КОМИТЕЧĔ ЙЫШĂННĂ РЕШЕНИ

ЛОНДОН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 27-мĕшĕнче Пĕрлешнĕ нацисен хатĕрлӳ комиссийĕн ĕç тăвакан комитечĕн юлашки ларăвĕ пулса иртнĕ. Ларура Пĕрлешнĕ нацисен хатĕрлӳ комиссийĕн ноябрĕн 8-мĕшĕнче ирттерме палăртса хунă ларăвне ноябрĕн 23-мĕшĕнче ирттерме йышăннă тата Пĕрлешнĕ нацисен генеральнăй ассамблейин декабрĕн 4-мĕшĕнче ирттерме палăртнă ларăвне çитес çулхи январĕн 2-мĕшпе 7-мĕшĕ хушшинчи пĕр-пĕр кун ирттерме йышăннă.

ИНДО-КИТАЙРИ ЛАРУ-ТĂРУ

ЛОНДОН, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Октябрĕн 27-мĕшĕнче каçхине Лондонри радио çапла пĕлтернĕ: Индо-Китайăн кăнтăрти пайĕнче Англи, Инди тата Франци çарĕсем Сайгон хулинчен иртсе кайнă та малалла куçса пыраççĕ. Восстани тăвакансем вĕсене хирĕç вăйлă контратакăсем тăваççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентстви Сайгон хулинчен пĕлтернĕ тăрăх, Францин çар влаçĕсем кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: французсен 2-мĕш танковăй дивизийĕ, Америкăн çар хатĕрĕсемпе усă курса, Тананран çурçĕртерехре 3 миля малалла кайнă. Сайгонри Китай районĕнче французсем аннамит халăхĕн нумай çыннине тыткăна илнĕ, çавăн пекех вĕсем хĕçпăшал та чылай тытса илнĕ. Англипе Инди çарĕсем Сайгон хулинчен çурçĕртерехре аннамитсен атакисене сирсе янă чухне тупăсемпе пенĕ. Аннамитсем пĕлтернĕ хыпарсем тăрăх, Чау-Док шывĕ районĕнче аннамитсене 200 çын вĕлернĕ.

АМЕРИКА КОРРЕСПОНДЕНЧĔ АМЕРИКĂРИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ШТАТСЕМ АНГЛИПЕ ГОЛЛАНДИРЕН ЫЙТНИ ÇИНЧЕН

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Юнайтед Пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Англипе Голландирен вĕсене кивçен панă материалсем çинчи Америка эмблемине (паллине) хуратса хума ыйтнă, мĕншĕн тесен акăлчансемпе голландецсем çав материалсемпе Индонези халăхне хирĕç вăрçаççĕ. Кунта çитнĕ хыпарсем тăрăх, акăлчансем Америка ыйтнипе килĕшнĕ, голландецсем ответ паман-ха.

Восстание ертсе пыракан Сойкарно Трумэн президентран çапла ыйтнă: голландецсене Индонези халăхне хирĕç çапăçнă çĕрте союзниксен материалĕсемпе усă курма чарăр, тенĕ. Юнайтед Пресс агентствин корреспонденчĕ çапла калать: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Сойкарно ыйтнине хирĕç ответ пама шутламаççĕ, мĕншĕн тесен Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен правительстви çапла шутлать имĕш: Сойкарно ыйтнине хирĕç ответ парсан, Индонезири лару-тăру тата ытларах пăтрашса кайма пултарать, тет.

КĔСКЕН

▲ Союзниксен командованийĕн штабĕ Япони правительствине приказ панă. Приказра декабрь уйăхĕн 1-мĕш кунĕччен Япони халăхĕнчен мĕнпур хĕçпăшала, çав шутра кинжалсене, хĕççене, сирпĕтекен япаласене тата вут кăларса перекен хĕçпăшала, пухса илме хушнă.

▲ Чили правительстви профсоюзсен 26 пуçлăхне тытса хупнă. Çав пуçлăхсем çĕр кăмрăкĕпе пăхăр шахтисенче тата ытти промышленноçра ĕçлекен 27.000 рабочие пĕрлештерсе тăнă. Вĕсем, рабочисен пурнăç условийĕсене лайăхлатма ыйтса, темиçе кун каярах рабочисен забастовкине пуçласа янă.

▲ Октябрĕн 24-мĕшĕнче Францин ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Бидо тата Чехословаки республикин тулашри суту-илӳ министрĕ Рипка Франципе Чехословакин суту-илӳпе финанс килĕшĕвне алă пуснă.

▲ Англин «Москито» ятлă самолечĕ октябрĕн 23-мĕшĕнче Атлантика океанĕ урлă нихăçанхинчен те хăвăртрах вĕçсе каснă. Вăл çав океан урлă 5 сехет те 10 минут хушшинче вĕçсе каснă. Самолет сехетре 445 миля вĕçнĕ. (ТАСС).

Англипе Америка экономика тĕлĕшпе калаçни

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ лайăх пĕлсе тăракан çынсем каланă тăрăх çапла çырать: Англипе Америка экономика тĕлĕшпе калаçнине пула Англи правительствине çак сĕнӳсене пăхса тухма панă: Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Англие 2 процент çинчен 4 миллиард доллар кивçен укçа памалла, пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацине туса хумалла, çав организацин задачи Англипе Америка тарифĕсене чакарасси пулмалла.

Иртнĕ эрнере çав калаçусем малалла каяйман, мĕншĕн тесен Англи правительстви, бюджет ыйтăвĕсене пăхса тухнă пирки çав асăннă сĕнӳсем çинчен хăйĕн шухăшне каласа парайман.

Çав калаçусенче процент ставки ыйтăвĕ чи йывăр ыйтусенчен пĕри пулса тăрать. Акăлчансем малтан пособи е парне илме, е процентсăр кивçен укçа илме ĕмĕтленнĕ пулнă. Анчах та американецсем çавăн пек килĕшĕве конгресс çирĕплетес çуккине пĕлсе тăнă. Кунта килнĕ хыпарсем тăрăх, çав кивçен укçана 50 çуллăха пама шутлаççĕ.

Англин пĕр пек мар тариф пошлинисем çинчен «Нью-Йорк таймс» хаçат корреспонденчĕ çапла çырать: канашлура Англие малашне тумалли пĕтĕм тĕнчери суту-илӳ организацин членĕсем пĕтĕм тĕнчери суту-илĕве анлăн сарса пыма кансĕрлекен чăрмавсене чакарма сăмах паччăр тенĕ шухăшпа килĕшме çеç сĕннĕ. Калаçура американецсем Британин танмар пошлинисене халех пăрахăçа кăларма ĕмĕтленнĕ пулнă, анчах та акăлчансем çапла тума килĕшмен, вĕсем Пĕрлешӳллĕ Штатсем хăйсен тарифĕсене чакариччен хамăрăн танмар тарифсене чакарма пултараймастпăр, тенĕ.

Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчи забастовкăсем

НЬЮ-ЙОРК, октябрĕн 25-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенче хальхи вăхăтра 250.000 çын забастовка тăвать, çав шутран 61.000 çын—хăма çуракан заводсенчи рабочисем (Америкăри ĕç федерацине кĕрекен профсоюз членĕсем), 16.000 çын—кĕленче промышленноçĕнчи рабочисем (Производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен профсоюз членĕсем) тата ыттисем те.

Хаçатсенче çитес вăхăтра вăрман промышленноçĕнчи 40.000 рабочи (Производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрекен профсоюз членĕсем), Лăпкă океан хĕрринче ĕçлекен 36.000 грузчик, 250.000 металлист (Америкăри ĕç федерацине кĕрекен профсоюз членĕсем), хурçă шăратакан предприятисенчи 900.000 рабочи яхăн тата Детройтри автомобиль завочĕсенчи 500.000 рабочи забастовка пуçласа яма пултарасси çинчен çыраççĕ.

Крайслерăн, «Дженерал Моторсăн» тата Фордăн автомобиль завочĕсенчи рабочисен ĕç укçине ӳстерессе çинчен предпринимательсемпе профсоюзсем калаçнинчен нимĕн те тухман.

«Дженерал Моторс» компанин председателĕ Вильсон октябрĕн 20-мĕшĕнче Трумэн президентпа канашланă. Çавăн хыççăн вăл автомобиль промышленноçĕнчи рабочисен профсоюзне (вăл профсоюз Производствăллă профсоюзсен конгресне кĕрет) çапла каланă: ĕç эрнине чакарма ан ыйтăр, вара компани ĕç укçине 5—8 процент таран ӳстерме килĕшĕ, тенĕ.

АНГЛИРИ ДОКЕРСЕН ЗАБАСТОВКИ

ЛОНДОН, октябрĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Англири докерсен забастовки чарăнман-ха. Бельфаст хулинче (Çурçĕрти Ирландире) тата 3.000 рабочи забастовка пуçласа янă. Октябрĕн 26-мĕшĕнче ирхине Лондонри темиçе çĕр докер митинга пухăннă. Митингра вĕсем—забастовка тума чарăнмалла мар, тесе йышăннă. Лондон портĕнче пушатасса кĕтсе тăракан суднăсем çумне октябрĕн 27-мĕшĕнче тата 5 судно хутшăннă, çапла вара пушатмасăр тăракан суднăсен шучĕ 69-а çитнĕ. Салтаксем 35 суднăна пушатаççĕ тата 14 судно çине таварсем тиеççĕ.

ЛОНДОН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Бристольре тата Бристоль çывăхĕнчи Эйвонмут хулинче забастовка тăвакан докерсем октябрĕн 27-мĕшĕнче ĕçе тухма йышăннă, вĕсем ун çинчен транспортниксемпе квалификацисĕр рабочисен союзĕн генеральнăй секретарьне телеграмма ярса пĕлтернĕ. Ытти вырăнсенчи забастовкăсем çаплах пыраççĕ-ха. Ливерпульре тата Мерсей шывĕ çинчи ытти доксенче 3.000 салтак ытла суднăсем çинчен апат-çимĕçе пушатаççĕ.

Çитес эрнере забастовка тăвакан мĕнпур портсенчи забастовщиксене ертсе пыракансен конференцине туса ирттерме хатĕрленеççĕ. Ку конференци Лондонра пухăнать пулмалла. Лондонри доксенче куллен пулса иртекен ирхи митингра забастовщиксен икĕ руководителĕ забастовкăна малалла та туса пыма чĕннĕ. Ку ĕçе правительство хутшăнсан тин забастовка тума чарăнапăр, тенĕ.

ИТАЛИРЕ ПОЛИТИКĂЛЛĂ ЗАБАСТОВКĂСЕМ ТУМА ЧАРНĂ

ПАРИЖ, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Франс Пресс агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен влаçĕсем Çурçĕр Италире политикăллă забастовкăсем тума чарса лартнă. Вĕсем çапла асăрхаттарнă: забастовка организаторĕсене тытса хупатпăр, тенĕ.

ИТАЛИРИ ФАШИСТЛА ПРЕСТУПНИКСЕНЕ СУД ТУНИ

РИМ, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки вăхăтра Çурçĕр Италире, фашистла преступниксен ĕçĕсене пăхса тухса, чылай приговорсем йышăннă. Октябрĕн 4-мĕшĕнче Падуя хулинче присяжнăйсен сучĕ фашистсен бандинче тăнă 5 çынна персе вĕлерме йышăннă. Çав бандитсем партизансене питĕ тискеррĕн асаплантарнă. Çав бандăри 2 çынна виличченех каторгăра усрамалла тунă, ыттисене 6 çултан пуçласа 30 çул таран тĕрмене хупмалла тунă.

Октябрĕн 4-мĕшĕнче Парма хулинче фашистсен бандинче тăнă 8 çынна вĕлермелле тунă. Вĕсем патриотсене вĕлернĕ, тискеррĕн асаплантарнă, хĕсĕрленĕ. Çав бандăра тăнă ытти 4 çынна 12 çултан пуçласа 30 çул таран тĕрмене хупса лартмалла тунă.

Октябрĕн 5-мĕшĕнче Турин хулинче присяжнăйсен чрезвычайнăй сучĕ йышăннă приговор тăрăх 5 фашиста персе пăрахнă, вĕсем Итали патриочĕсене нумай вĕлернĕ пулнă.

Парма хулинчи суд Марина Каппелли ятлă фашисткăна вĕлермелле тунă. Çав фашистка Муссолини влаçĕсене 64 патриота кăтартса панă, вара вĕсене пурне те темĕн тĕрлĕ асаплантарнă, кайран вĕлернĕ. Брешиа хулинчи чрезвычайнăй суд Милан хулин префекчĕ пулнă фашиста Уччеллие суд тунă, вара ăна 30 çуллăха тĕрмене хупса лартмалла тунă.

Кунео хулинче октябрĕн 23-мĕшĕнче 12 бандита суд туса пĕтернĕ. Вĕсем фашистсен «хура бригадисенче» тăнă, Италие нимĕçсем оккупацилесе тăнă вăхăтра партизансене асаплантарнă, нумайĕшне вĕлернĕ.

ДЕНЦ ГЕНЕРАЛА ВĔЛЕРМЕ ЙЫШĂННĂ ПРИГОВОРА УЛĂШТАРСА, ДЕ ГОЛЛЬ ДЕНЦА ВИЛИЧЧЕНЕХ ТĔРМЕРЕ УСРАМАЛЛА ТУНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви Парижран пĕлтернĕ тăрăх, де Голль генерал, Францин Сирири верховнăй комиссарĕ пулса ĕçленĕ Денц генерала вĕлермелле тунă приговора улăштарса, Денц генерала виличченех каторгăра ĕçлеттермелле тунă, анчах кайран, Денц ытла ватă пирки, де Голль ăна каторгăра ĕçлеттерес вырăнне виличченех тĕрмере усрамалла туса хунă.

ФРАНЦИ ХАÇАЧĔСЕМ ДЕНЦ ГЕНЕРАЛА КАÇАРНИНЕ ХИРĔÇ ÇЫРАÇÇĔ

ПАРИЖ, октябрĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Франци хаçачĕсем Денц генерала каçарнине хирĕç çыраççĕ.

«Юманите» хаçат çапла çырать: «Денц генерал Париж хулине нимĕçсене панă тата вăл Сирире французсене пĕр-пĕрипе çапăçтарнă. Çав тӳсме çук усал ĕçсемшĕн ăна Францин сучĕ вĕлермелле тунăччĕ, анчах халĕ ăна виличченех каторгăра ĕçлеттермелле туса хунă. Мĕне пĕлтерет ĕнтĕ тăрă шыв çине кăларнă сутăнчăка çавăн пек çăлса хăварни? Иртнĕ вырсарникун Франци халăхĕ тăшмана хирĕç тăнă наци совечĕн программине çав тери саванса ырларĕ, çав программа сутăнчăксене тивĕçлипе айăплама хушать. Çавăнпа та Франци халăхĕ сутăнчăксене каçарассине хирĕç тăрать».

«Попюлер» хаçат çапла çырать: «Париж халăхĕ Денц генерала каçарни çинчен пĕлсессĕн питĕ тĕлĕнчĕ. Денц генерал Петэн хушнипе Францин союзниксен темиçе çĕр салтакне вилме янă. Ăна çавăн пирки те Франци сучĕ вĕлермелле тунăччĕ. Халĕ общество ăна каçарни çинчен пĕлчĕ. Франци çак кунсенче кăна пĕтĕмĕшле тĕрĕслĕх пирки хăйĕн ирĕкне çирĕппĕн палăртнă хыççăн, пирĕн власть хăйĕн çемçелĕхне тепĕр хут кăтартса пачĕ».

«Фран Тирер» хаçат та çавăн пекех Денц генерала каçарнине хирĕç çырать.

АКĂЛЧАНСЕН ДАНИРИ ÇАР МИССИЙĔН НАЧАЛЬНИКĔ КАЛАНИ

КОПЕНГАГЕН, октябрĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Берлингске Тиденге» ятлă хаçат хăйĕн корреспонденчĕ акăлчансен Данири çар миссийĕн начальникĕпе бригада генералĕпе Кроупа калаçнине пичетлесе кăларнă. Корреспондент çапла ыйтнă: акăлчансен юлашки салтакĕ Данирен хăçан тухса кайĕ? тенĕ. Кроу генерал çапла каланă: ăна калама питĕ йывăр. Яланхи çарсем тухса кайнă хыççăн Данире пысăках мар ушкăнсен юлмалла пулать. Çав ушкăнсен нимĕçсем Данире хăварнă япаласене вырнаçтарас тĕлĕшпе ĕçлемелле пулать. Çар миссийĕн Дание ирĕке кăларнă чухне пуçланă ĕçĕ пĕтнĕ ĕнтĕ, анчах та халĕ ун умне пачах та çĕнĕ задача лартнă. Эпир Дани çарне çĕнĕрен йĕркелесе ярас, çав çара хĕçпăшал, тумтир тата ытти япаласем паратас ĕçе хутшăнма шутлатпăр, тенĕ.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: гор. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн—0-67, заместителĕн — 2-89, секретариатăн—4-26, пропаганда пайĕн—2.89, парти пурнăç пайĕн—3-97, промышленность пайĕн—3-99. ялхуçалăх пайĕн—3-99, рабселькорсен пайĕн—0-67, издательство конторин — 0-23.
Типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. ф. 6. 59.42. 1 п. л. Тираж 16.000 экз.